

# Аслă ăру – çамрăксемшĕн тĕслĕх

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Елена Порфирьева

## Вăрăм ĕмĕрлисем – пирĕн пуянлăх!

**Кĕр çитнĕ май аслă ăрурисем юбилейсене ытларах паллă тума пуçларĕç. Вĕсене вăрăм ĕмĕрлĕ пулма Турă пилленĕ тейĕн. Кăмăлĕпе ырă, хăнавĕрлене тараватъ. Никама та усал сунман, йывăрлăхра пуçа усман вĕсем.**

Акă, хăйĕн сумлă 90 çулхи юбилейне Чăрăш Ишекре пурăнакан Тамара Васильевна Михайлова чаплăн уявланă.

Йывăр саманара çуралса ÿснĕскер, çав çулсен хаяр тĕрĕслевĕсем витĕр тухнă, вăрçă хыççăнхи тертлĕ тапхăра тÿссе ирттернĕ. Тамара Васильевна хурипе шуррине самаях курнă пулсан та чун çутине, чĕре ăшшине тата пурнăç хавасне упраса хăварма пултарнă.

Паян Тамара Васильевна чун çирĕплĕхĕн, ĕçри паттăрлăхпа чăваш халăх ăс-хакăлĕн чĕрĕ сăнарĕ пулса тăрать.

Тамара Михайлова хăйĕн кун-çулне тăван колхоза аталантарассине халалланă. Унăн пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ – 42 çул. Сумлă çулсене пăхмасăр сăпайлă чăваш хĕрарăмĕ çирĕп ăс-тăнлă, кашни куна – çумăрлă-и вăл, хĕвеллĕ-и – хавхаланса кĕтсе илет. Хăйĕн пуян ĕç биографийĕн кашни тапхăрне асра тытать. Мăшăрĕпе пĕрле ывăлĕсене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерес тесе алăран пĕр ĕç яман, çăмата та йăвалама ăста пулнă.

**Елена ГРИГОРЬЕВА**



*Тамара Михайловăна юбилей кунĕнче округ пуçлăхĕ Н.Никандрова, Шĕнер Ишек территори пайĕн пуçлăхĕ Р.Убаков саламланă.*

## Пĕтĕмпе пин штук!

**Çĕньял Хапăсра пурăнакан Анна Николаевна Платонова çулталăкра СВО салтакĕсем валли çакăн чухлĕ аялти йĕм çĕленĕ!**

Анна Николаевна ыйтнипе тăван ялĕнче пурăнакансем ăна пусма татăкĕсем чылай килсе параççĕ. Андрияновсен çемйи, ак, темиçе ăстрăмпа 500 метр таран материал туянса пама пултарнă.

Эрнере тепĕр чухне 30–40 таран çĕлет вăл труссисене. Хатĕр изделисене РДК-ри сыхăм пунктне çитерсе парать.

Анна Платонова 77 çулта, апла пулин те унра хастарлăх иксĕлми. Салтаксене вăл май килнĕ таран пулăшма тăрăшать.

– Ентешсем пирĕн ырлăха, ăшăлăха туйччăр. Вĕсене пурне те Çĕнтерÿпе кĕтетпĕр, – тет вăл.

**Светлана ЧИКМЯКОВА**



## Тĕрлĕ ăрусене пĕрлештерчĕ

**Малтикас Ялтăрари ял уявĕ асра юлчĕ.**

Программăна спорт мероприятийĕсем кĕртнĕ, вăй-хала виçсе вылямалли вăйăсем те пулчĕç. Ăмăртусенче мала тухнисене грамотăсемпе парнесем парса чысларĕç. Ялти чи ватă çынна тата юбилярсене хисеплерĕç, ырă сăмахсем каларĕç. Атăл юханшывĕ пек вăрăм кун-çул, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх сунчĕç. Тухса калаçакансем, юрă шăрантаракансем сахал мар пулчĕç. Шупашкартан килнĕ Малтикас Ялтăра кинĕ Анастасия Александрова, музыка енĕпе пĕлÿ илнĕскер, уçă сассипе питĕ илемлĕ юрларĕ. 9 çулти Дарья Иванова, яла кукамăшĕ патне килнĕскер, чăваш çипуçĕ тăхăнса сцена çине тухрĕ, икĕ юрă юрласа пачĕ – чăвашла тата вырăсла. Вăл вокал кружокне çÿрет. Юрăкĕвĕ питĕ илемлĕ янăрарĕ.

Шупашкартан килнĕ Альбина Пăрчăкан, Алексей Шадриков, Петр Ермолаев артистсен илемлĕ юррисемпе çамрăксем ташласа савăнчĕç. Çывăхри ялсенчен те çынсем нумаййăн. Константин Евруков, Валентина Кузнецова, Дипендра Мани юрăçсем сцена çине тухсанах çамрăксем ташă картине тăчĕç.

Кушар Юнтапари, Вăрманкасри артистсем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

Ял уявĕсене çулран-çул Станислав Николаев старостăпа çамрăксем лайăхрах та лайăхрах ирттерме тăрăшаççĕ. Шÿрпе çимелли вырăнсене хÿтлĕх туса профнастилпа витнĕ. Кашни çул чăваш сăрине ватă çынсен рецепчĕпе вĕретсе пĕçереççĕ. Кăпăклă ĕçмепе Валерий Давыдовпа Владимир Тихонов хăналарĕç.

Кашни çулах праçнике Венера Прокопьева пултаруллă ертсе пырать.

Малтикас Ялтăрари маттур та тăрăшуллă çынсем, ял уявне малашне те хальхи пекех йĕркелесе ирттерме тăрăшăр. Эсир нумай вăхăт пĕр-пĕрне курман ентешсене, тĕрлĕ ăрури тăвансене тĕл пулма, чунĕсене уçма, чăваш культурине аталантарма майсем туса паратăр. Пĕтĕм ял-йыш ячĕпе сире чĕререн тав тăватăп.

**Нина ПАРАМОНОВА**
Малтикас Ялтăра

## Çăкăр çитерекене мухтав!

**Çăкăртан асли çук, теççĕ. Вăл çын пурнăçĕн, сывлăхĕпе ырлăхĕн символĕ. Чи авалхи тата тĕлĕнмелле çимĕççенчен пĕри. Çăкăрпа пирĕн халăхăн нумай ырă йăли-йĕрки çыхăннă. Кирек мĕнле уявра та халĕ те тĕрĕллĕ алшăлли çине çăкăр-тăвар хурса хăнасене кĕтсе илеççĕ.**

Ку чухнехи ăрушăн мăн асаттесемпе мăн асаннесен ĕçне хисеплени, историе пĕлни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Аваллăха тĕпчени малалла аталанма пулăшать.

Хресчен ĕçĕ-хĕлĕ çăмăл пулман. Тырпула пухса кĕртес тесен хура тар сахал мар кăларма тивнĕ. Комбайнсем пулман. Ĕлĕк техника пирки ĕмĕтленмелли кăна юлнă.

Тырра çурлапа, çавапа вырнă. Ял хуçалăх культури çÿллĕ те çăра ÿссен çурлапа усă курнă, ахаль чухне çавапа çулнă. Хĕвел питтинче кунĕпех ĕçлесе кун касси йăх-несĕлĕмĕрсемшĕн йывăр пулнă. Уйрăмах çурлапа тырă вырнă чухне. Çавăнпа та мĕн авалтан вырма вăхăтне «асап» тенĕ.



Округра тырпул пухса кĕртес тапхăр хĕрÿ пынă чух Малтикас Ялтăрари вулавăшра «Çăкăра – ĕмĕрлĕх хисеп!» тавралĕлÿ сехечĕ ирттернĕ.

Мероприятие килнисем «сарă ылтăна» пухса илессипе çыхăннă авалхи йăла-йĕркепе паллашнă, мастер-класа хутшăнма пултарнă.

Ăсталăх класне Малтикас Ялтăрари библиотекăн хастар вулаканĕ – 91 çулти Галина Никитична Семенова – ирттернĕ. Маттур кинемей хăйĕн ачалăхĕпе çамрăклăхне аса илнĕ. Пĕчĕкренех уй-хир ĕçĕсене хастар хутшăнни, тырпула пысăк йышпа вырни çинчен каласа кăтартнă. Ăсталăх класĕнчен çамрăксем те пулнă.

Хамăр çиекен çăкăр хакне кашнин пĕлмелле, пурне те тăрантаракан хресчене хисеплемелле.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**